# Чăнлăх

КПРФ Чăваш рескомĕн хаçачĕ №28 2016 çулхи июлĕн 7-мĕшĕ

«Раççей Федерацийĕнчи Коммунистен партийĕ» политика партийĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ

# Пирĕн кандидатсем

**Кĕçех, сентябрĕн 18-мĕшĕнче, Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин тата Чăваш Республикинчи Госсоветăн суйлавĕ иртет. Госдума суйлавĕ Республикăра парти списокĕсем тăрăх тата пĕр мандатлă икĕ округра – Канаш тата Шупашкар округĕсенче иртет.**



***Пĕр мандатлă Шупашкар суйлав округĕ тăрăх РФ Госдума депутатне суйлама КПРФран Валентин Сергеевич Шурчанов кандидатурине сĕннĕ.***

**В.С.ШУРЧАНОВ** 1947 çулта çуралнă, Чăваш, Раççей Федерацийĕн Федераллă Пухăвĕн Госдума депутачĕ, Госдумăра информаци политикипе, информаци технологийĕпе тата çыхăнăвĕпе ĕçлекен Комитет председателĕн пĕрремĕш заместителĕ, КПРФ Тĕп Комитечĕн Президиумĕн членĕ, КПРФ Тĕп Комитечĕн депутатсен вертикалĕпе, регион политикипе тата вырăнти хăйтытăмлăхпа ĕçлекен яланхи комисси председателĕ, КПРФ Чăваш рескомĕн пĕрремĕш секретарĕ. СНГ-а кĕрекен патшалăхсен Федераци Пухăвĕнчи Патшалăх Думин яланхи депутацийĕн членĕ, çак организацин патшалăх тытăмĕ тата вырăнти хăй тытăмлăх енĕпе ĕçлекен яланхи комиссийĕн членĕ. Атăлçи федераци округĕнчи гражданла общество институчĕсене аталантарас енĕпе туса хунă Обществăлла канаш членĕ.



***Пĕр мандатлă Канаш суйлав округĕ тăрăх РФ Госдума депутатне суйлама КПРФран Григорий Владиславович Данилов кандидатурине сĕннĕ.***

**Г.В.ДАНИЛОВ** 1978 çулта çуралнă, чăваш. Аслă пĕлӳ илнĕ – 2001 çулта Чăваш патшалăх университетне (юриспруденци), 2006 çулта Мускавра Пĕтĕм тĕнчери менеджмент институтне пĕтернĕ. Партире тăмасть (КПРФ майлă). Потребительсен прависене хӳтĕлекен «Халăх контролĕн комитечĕ» чăваш регион общество организацийĕн правленийĕн председателĕ, Чăваш Республикинчи «Халăх ревизорĕ» проектăн пуçлăхĕ, РФ Госдума депутачĕн В.С.Шурчановăн помощникĕ. 15 çул политконсалтингпа çыхăнуллă – «Политтехнологсен Мускаври шкулне» никĕсленĕ. Шупашкар хула Пухăвĕн депутачĕ пулнă (2005–2010 çулсенчи 4-мĕш суйлав, 2010–2015 çулсенчи 5-мĕш суйлав). Авланнă. Икĕ хĕр пăхса ӳстерет.

# КПРФран депутата тăратнă кандидатсем

Июлĕн 2-мĕшĕнче Шупашкарта КПРФ Чăваш Республикин уйрăмĕн черетсĕр 63-мĕш отчетпа суйлав конференцийĕн иккĕмĕш тапхăрĕ иртнĕ. «Раççей Федерацийĕнчи Коммунистсен партийĕ» политика партийĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн суйлав пĕрлешĕвĕ ЧР Патшалăх Канашĕн 6-мĕш созыври депутатсен суйлавне хутшăнма йышăну тунă. Вăрттăн сасăлавпа пĕр мандатлă мĕнпур суйлав округĕпе 22 кандидатура, парти списокĕпе депутатсен 68 кандидатурине çирĕплетнĕ. Пĕтĕмпе 90 çын. Конференци делегачĕсем парти списокĕн пуçне икĕ çынна кĕртсе çирĕплетнĕ, вĕсем: **Валентин Сергеевич ШУРЧАНОВ** – КПРФ Чăваш рескомĕн пĕрремĕш секретарĕ, КПРФ Тĕп Комитечĕн Президиумĕн членĕ, РФ Федераллă Пухăвĕн Патшалăх Думин депутачĕ тата **Юрий Чонгарович ШЛЕПНЕВ** – Шупашкарти «Энергозапчасть» опытпа эксперимент завочĕн генеральнăй директорĕ.

# Танлаштарăр, шухăшлăр: кам мĕнле ĕçлет?

| **КПРФ сĕннĕ – «ЕР» хирĕçленĕ** | **«ЕР» (правительство) сĕннĕ, йышăннă – халăх хирĕçлет** |
|---|---|
| **Ĕç правине – гаранти. Халăха хирĕçле Ĕç кодексне пăрахăçламалла. Вăтам тата вак бизнеса патшалăхăн пулăшмалла.** | **Халăха хирĕçле Ĕç кодексне йышăнни. Ĕçшĕн тӳлессине чакарса пыни. Ĕçлекен пенсионерсене пенси тӳлеменни. Пенсие тухмалли срока ӳстерни.** |
| **Топливо, энергетика, стратеги предприятийĕсем, çав шутра табак тата алкоголь производстви патшалăх аллинче пулмалла. Стабилизаци фондне Раççее тавăрмалла, экономика секторне хывмалла. Ял хуçалăх предприятийĕсене патшалăхран пулăшмалла.** | **Доллар хакĕ ӳсет – импортозамещени тени палăрмасть. Энергетика ставкисем капашсăр пысăк. Ĕç укçине вăхăтра тӳлемеççĕ. Нефть хакĕ чакать – бензин хакĕ хăпарса пырать. Бизнес влаçа çывăх олигархсен кăна ĕрĕхсе аталанать.** |
| **Пĕлӳ, вĕренӳ – пуриншĕн те тӳлевсĕр. Аслă вĕренӳ заведенийĕсене, ачапча учрежденийĕсене бюджет тивĕçтермелле. ЕГЭ пăрахăçламалла. Вĕренсе тухнă специалистсене ĕç вырăнĕпе тивĕçтермелле.** | **«ЕР» хуçаланнă тапхăрта Раççейре 25000 шкул хупнă. ЕГЭ коррупцие анлăлатрĕ, выпускниксен шутне чакарчĕ, шухăшлама хăнăхтармасть. Бакалавр-магистр тытăмĕ аслă пĕлӳ туянассине пӳлсе тăрать.** |
| **Çĕрпе спекуляци тунине, ăна ют çĕршыв çыннисене сутнине чарса лартмалла. Вырăнлă усă курман çĕрсене çирĕп алла илмелле.** | **Налога рынок хакĕпе палăртаççĕ: ултă соткăшăн та тӳлейми пулатпăр. Элитăшăн çурт лартма çĕр туртса илнине чарса лартмалла. Ял хуçалăхĕнче 41 миллион гектар сухаланмасăр, усă курмасăр выртать.** |
| **Прогрессивлă налог шкалине çирĕплетмелле. Кризис тапхăрĕнче продукци тăвакансенчен налог пухма тăхтамалла. Тупăш çемье членне 15 пин тенкĕ çеç тивсен, налог пачах хумалла мар.** | **Халь кĕтӳçĕ те, миллиардер та налог пĕр пек тӳлет. Хваттершĕн, çĕршĕн, çав шутра дачăсемпе гаражсемшĕн, налог виçине пĕрмай ӳстерни тĕрĕс мар. ОСАГОшăн 20 пин тӳлени – капашсăр.** |
| **Капремонт законне пăрахăçламалла. Коммуналлă тӳлевсен шайне чакармалла. ЖКУшăн çемье тупăшĕн 10 процентĕнчен пысăкрах тӳлес çук. Çурт-йĕр фончĕшĕн патшалăх яваплă.** | **Капремонтпа коммуналлă тӳлевсем ĕнĕççĕр пысăк. Коррупци серепинчи управляющисене патшалăх контроллемест.** |
| **Коррупционерсен пурлăхне конфискацилеме закон питĕ кирлĕ. Чиновниксен, вĕсен çемйисен, çывăх тăванĕсен тупăш-расхут декларацине кăтартакан закон кирлĕ.** | **Уголовлă кодексăн судпа айăпланнă коррупционерсен пурлăхне конфискацилесси пирки йышăннă статйине пăрахăçлани тĕрĕс мар.** |

# «Едро» рейтингĕ ӳксе, анса пырать

Социологсем кăтартнă тăрăх, «едроссемшĕн» сасăлама хатĕррисем апрельте кăна 42 процент пулнă пулсан, май уйăхĕн вĕçĕнче çак кăтарту 35 процента çити анса ларнă. Влаçри парти кашни 6-мĕш суйлавçăна çухатнă. «Левада-центр» директорĕн çумĕ Алексей Гражданкин ăнлантарнă тăрăх, çакă «праймериз» акцие пĕтĕмпех адмресурс шучĕпе çавăртарса хунинчен килсе тухнă. «Демобилизаци пырать, «Единая Россия» электорачĕн рейтингĕ куç умĕнчех ӳксе, анса пырать», – тенĕ эксперт.

«Праймеризра» суйлавçăсем çĕнĕ сăн-сăпат тĕл пулман, йăлăхтарнă «кандидатсене» сивлесе йышăннă. Чиновниксем ытларах хăйсен тăванĕсем, бюджетниксем хушшинче ĕçленĕ, рабочисем патне, ял çыннисем патне тухма шикленнĕ. Патшалăх кризиса кĕрсе ӳкнĕрен, пурнăç шайĕ хăвăрт начарланса пынăран çынсем çивĕч ыйтусем çине хурав ыранă. Парти лидерĕ Дмитрий Анатольевич Медведев та тĕллĕ ответ парасшăн мар. «Пенсисене хăçан индексацилетĕр?» тесе ыйтсен, «Укçа çук, эсир унта чăткалăр!» тенĕ премьер.

**А.СМИРНОВ.**

# Коммунистсем – суйлаври тĕрĕслĕхпе чăн-чăн уççăнлăхшăн

Депутат-коммунистсен Пĕтĕм Раççейри иккĕмĕш съезчĕ çитес суйлавсен ячĕпе Чĕнсе калани йышăнчĕ. Унта граждансем влаçри суйланă органсене начар шанние палăртнă. 2011–2012 çулсенче халăх суйлаври суялăха хытă хирĕçлерĕ, тенĕ. Коммунистсен партине хирĕç провокацилле кампани пырать. КПРФ ячĕпе пысăк тиражпа суя хаçатсем салатаççĕ. Парти активисчĕсене сĕмсĕрле хĕстереççĕ, хĕçпăшалпа тапăнаççĕ. Пирĕн кандидатсем граждансемпе тĕл пулнă чухне тем авăкра хулигансем тупăнаççĕ. Право органĕсем унашкаллисене кура-тăркачăн чармаççĕ.

Суйлавра демократие хирĕçле сценарисем ĕрĕхсе кайсан легитимлăх пирки калаçмалли çук. Суйлав кампанинчи уголовлă, администратиклă преступленисем çĕршыв хăрушсăрлăхне хупăрлаççĕ. Сасăлав итогĕсене фальсификациленине, суйлав законодательствине пăснине Конституцие хирĕç тунă преступлени вырăнне йышăнмалла. Айăплисене мĕнле должноçрине пăхмасăр ответ тыттармалла.

Суйлавсен тасалăхĕшĕн эпир кирек кампа та пĕр пулса, килĕшсе ĕçлеме хатĕр, тенĕ Чĕнсе каланинче, комисси членĕсене закона çирĕп пăхăнса ĕçлеме йыхравлатпăр. Суйлав ирттернĕ вăхăтра влаçри органсен политпартисенче тăракан представителĕсене отпуска – канăва тухма сĕнетпĕр.

Тĕрĕслĕхĕпе, уççăнлăхĕпе кăна суйлавсем халăх влаçĕн шанчăклă институчĕ пулса тăма пултарĕç.

# Депутат-коммунистсен тивĕçĕ

**Депутат-коммунистсен Пĕтĕм Раççейри иккĕмĕш съездĕнче делегатсем Раççей гражданĕсем умĕнчи обязательствăсене палăртнă (вĕсемпе туллинрех «Правда», «Чебоксарская правда», «Советская Россия» хаçатсен иртнĕ уйăхри номерĕсем урлă паллашма пулать).**

КПРФăн кризиса парăнтармалли программине Орел хулинче иртнĕ экономика форумĕнче палăртнă. КПРФ халăха, тĕллĕн яш-кĕрĕме ĕçпе тивĕçтерессине паллă вырăна хурать. Бюджетниксен ĕç укçине инфляци шайĕнчен ирттерсе индексацилемелле. Ĕçшĕн тӳлени сахалтан пурăнмалăх минимум шайĕнче пулмалла. Тӳлевсĕр вĕренĕве, медицинăна каялла тавăрмалла. «Вăрçă ачисене» хӳтĕлекен закон йышăнмалла т.ыт.те.

Кашни депутат-коммунист çакăншăн кĕрешме тивĕç:

- çаратуллă, аркатуллă приватизацие хирĕç;
- ЖКХ тарифĕсене пĕрмай ӳстерсе пынине хирĕç;
- пенсие тухас çула пысăклатнине хирĕç;
- коррупцие, полицие, тӳре-шарана контрольсĕр ирĕке яракан закон проекчĕсене хирĕç т.ыт.те.

КПРФ фракцийĕсен чухăнлăхран хăтăлса пымаллаи законсемшĕн çапăçмалла. ЖКХ тивĕçтерĕвĕшĕн çемье бюджетĕнчен 10 процент ытла мар тӳлеттермелле т.ыт.те.

Антисоветизм пропагандине, совет саманипе çыннине вĕçĕмсĕр вараланине чармалла!

# Хăравçă – пурнăç çынни мар

**Пурте пĕлнĕ çĕр-çĕр фактран пĕри. Ятлă-сумлă учитель ял-йыш ыйтнипе-хĕтĕртнипе район Пухăвĕн депутачĕ пулма килĕшет. Ял Канашĕнче депутатра нумай хутчен пулнăскерĕн опычĕ çителĕклĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ кандидатсен йышĕнче, директорсемпе гендиректорсем хушшинче, учитель пуррине асăрхать: «Ку тата мĕне пĕлтерет!». Шкул директорне хăй пӳлĕмне чĕнтерет: «Учитель вырăнти влаçа хирĕç пуçтахланма пултарать. Кандидатурине паянах пăрахăçлатăр! Атту ху та вырăнта юлмастăн!».**

Кунашкал тĕслĕхсене, паллах, хăвăр та пайтах пĕлетĕр. Хăй те КПСС членĕ шутланнă чиновник коммунист е совет çынни ятне илтсен туххăм сехрине хăпартса хăраса каять, коммуниста килĕштернĕ ĕçĕнчен пурпĕр хăйпăтать. КПРФ пĕрлешĕвĕсенче пирĕн районта ахальтен мар пенсионерсем кăна тăрса юлчĕç.

Едроссем «праймериз» ятпа политтехнологилле акци ирттерчĕç. Сасăлама кашни учителĕн вунă çын çавăртса пымалла: «Астăвăр – пурне те тĕптĕрĕс шута илетпĕр!» Коллективсен руководителĕсем хăйсен çыннисем суйлава утнине урăх ним тумасăр сăнаса-пусмăрласа тăчĕç. Бюджетниксем, шереметсем, суйлав тесенех хыпăнса ӳкеççĕ: камшăн епле чупмаллине хăнăхса çитнĕ ĕнтĕ.

Суйлавсен технологинче халĕ адмресурс пысăк пăтăрмахлă. Критиклеме пултаракан, çĕнĕ проектсем сĕнекен кандидатсене сăмах парасшăн мар тем-тем тĕрлĕн пӳлеççĕ. Участокри комиссисене центртра палăртса тӳре-шаран çывăх тăванĕсенчен, хушнине çăмăллăн пурнăçлакан хĕрарăмсенчен чăмăртаççĕ.

Фальсификацин ансат меслечĕсем – срокчен тата килте сасăлаттарни. Ку йышши суйлавçăсене малтанах асăрхаттарнă: е премĕкпе илĕртнĕ, е чăпăрккапа юнанă. Участока утайман çын ялта пĕр темиçе пур-и тен, анчах сасăланисен списокĕнче вун-вун е çĕр çын ытла çырăннă пулсан, пĕлсех тăр – ултав ку, суя!

Адмресурс аргуменчĕсем: «Асту, хăвна та, ачусене те ĕç памастпăр!», «Хамăр хушнă пек сасăла, унсăрăн пенси те, индексаци те пулмасть!», «Пирĕншĕн тăрсан, çул та хывăпăр, туалет та лартăпăр!»

Ни ялта, ни районта застой текелетпĕр. Мĕншĕн? Влаçра нимĕн те улăштармасан, пурнăç та улшăнмасть, аталанмасть, пурнăç тума хăратса пусăрăнтарнă çынсем мар, общестăври активлă граждансем кирлĕ!

**Д.МИТРОФАНОВ,**
**1997 çултанпа КПРФ членĕ.**






Вăрнарăн «Хĕрлĕ кĕтес» тенĕ вырăнĕ пур. Вăл поселокри Ашмаров тата Гагарин урамĕсем хĕресленнĕ тĕлте вырнаçнă. Петĕр Ялкир поэт хăй аллипе туса лартнă çуртра ун ячĕпе уçнă музее пĕр вăхăтрах тавралăх музейĕ, компарти историйĕн музейĕ, чăваш наци литературин музейĕ теççĕ. Кунта чăнахах та пысăк пуянлăх пухăннă. Пĕтĕмпех поэтăн кĕçĕн ывăлĕ, КПРФ членĕ Владислав Петрович Тихонов йĕркеленĕ. Музее шкул ачисем, студентсем, хулапа ял çыннисем, хăнасем çӳреççĕ, кунта общество организацийĕсен мероприятийĕсем иртеççĕ, çурт алăкĕ шăматкунпа вырсарникун кăнтăрла иртни иккĕччен яланах уçă.

# Октябрьти революцин 100 çулĕ çывхарать

**Халăхра совет саманине манман. Раççейри ку чухнехи лару-тăрăва кура нумай-нумай çын хальхине хăй ирĕклĕрех, пархатарлăрах, интереслĕрех пурăннă вăхăтрипе танлаштарать.**

Пурте пĕр тан чухне нимĕнле «застой» та курмарăмăр. Ак ĕнтĕ, вăтăр çул чăнласах, «застойра», сирсе сирĕлейми кризиссенче пурăнкалатпăр. Раççее уççăн курайманнисем халтăрланчĕç. «Пиллĕкмĕш колонна» патшалăха шалтан кăшлать, халăхăн чĕрĕ вăйхалне путарасшăн. Çитменнине, суйлавсем умĕнхи «праймериз» тенĕ «операци» пăтăрмах турĕ: пысăк тăкаклă «адмресурс» хăйĕн сăн-питне бюджетниксене пуссăрла пусмăрланипе кăтартрĕ, «Вилĕмсĕр полкра» пĕрле пулнисене хирĕçтерсе калаçтарчĕ.

Телеканалсенче каллех антисоветизм кампанийĕ ĕрĕхет. Çитĕнекен ăрăва историпе «Ельцин-центр» витĕр паллаштарасшăн. Федераци Канашĕн членĕ Сталина хирĕçле закон çаптарасшăн. Польшăра ку çĕршыва ирĕке кăларса çапăçса вилнĕ салтаксен палăкĕсене 500 таран тĕп тума планланă...

Ырă мара асăрхаттаракан тĕслĕхсем çĕр те пин. Коммунистсен истори тĕрĕслĕхĕшĕн, совет саманин геройĕсемшĕн çивĕччĕн тăма тивет.

**В.АЛЕКСЕЕВ.**

# Вилес килмесен... телемедицина чĕртесшĕн

Госдумăна телемедицина текен закон проектне тăратнă. Унпа килĕшӳллĕн Сывлăх министерстви Раççей халăхне каталан сиплессине вăя кĕртме пултарать. Кашпировский Мускавран Грузири хĕрарăма операци тунине асилер-ха эппин. Врачсене интернет тăрăх пациентсене инçетрен диагноз лартма официаллă йĕркепе ирĕк парасшăн. Ку меслете медцина малашлăхĕ тесе палăртасшăн. Чăн-чăн чĕрĕ тухтăра виртуаллипе ылмаштарасшăн. Врач телеперсонаж пек кадрта курăнса сана хăшпĕр паха сĕнӳсемпе «эмеллет» те эфиртан çухалать. Çапла мĕльюн-мĕльюн çынна ансаттăн сыватма пулать-мĕн. Чухăн çыншăн больница тени телерекламăра та телемедицинăра тăрса юлать. Сывлăх сыхлавне пушшех те «оптимизацилесшĕн». Суйлавсенче çавнашкал законсем штамплакан депутатсемшĕн сасăлатпăрçке-ха! Астума: официаллă статистика евитленĕ тăрăх, ку чĕрĕк ĕмĕрте Раççейри больницăсен шучĕ çурри ытла чакнă, поликлиникăсен пĕрревиççĕмĕш пайĕ хупăннă. Сакăр вунă пин ялта фельдшер та çук. Çав вăхăтрах Госдумăра коммерципе коррупци валли тепĕр çул уçса пама хатĕр.

**Л.БУРАЙКИН.**

# Тĕрме уншăн тĕлĕкĕнче те çук...

«Едроссен» 6-мĕш суйлаври Патшалăх Думинчи пурне те асра юлмалла тĕлĕнтерне паллăрах ĕçĕ – Раççей Оборона министрĕ пулнă А.Сердюкова судпа тĕрмерен çăлса хăварни. Оборона заказĕсемпе ĕçлекен федераллă служба кăна 35 миллиард тенкĕ тĕлсĕр вĕçтернине палăртнă. А.Сердюков тĕлĕшпе Çарăн Тĕп прокурорĕ 150 ытла представлени тăратнă. Анчах Ю.Чайка Генпрокурор вĕсене тимлĕ вуламан. Махинацисене пĕр прокурор курнă, шута илнĕ, тепри куçне хупса ирттернĕ пек пулса тухать.

**Стас ИЛЬИН.**

# ХАПремонт

ЖКХ... Ку аббревиатурăна тĕрлĕ майлă хуçкаласси Патшалăх Думинчи едроссем 2004 çулта йышăннă законран пуçланчĕ. Отрасле уйрăм алăсене салатнă майăн чăн-чăн пăтăрмах тапранчĕ: кам кама маларах, ытларах улталаять? ЖКХ: «Жулики. Коррупционеры. Хапуги»; «Жилищно-коммунальный хищник»; «Живем каждодневно хуже...» т.ыт.те. Иртнĕ çулта ЖКХ парăмĕсем триллион тенке çитнĕ. Çав вăхăтрах тарифсем мĕнпур енĕпе ӳссе пыраççĕ. Вунă çулта 50 хут хăпарнă! ХАПремонтпа çаплах-ха ăнланса, вĕçне-хĕрне тухса пĕтерейменрĕмĕр. Пирĕн çуртран никам та тӳлемест.

**Н.ВЛАСОВА.**

# Чухăннин шалăвĕ пин хут пĕчĕкрех



**Экономика наукисен докторĕ С.А.Кимельман хаçатра çак уйăхра çырнă тăрăх, «Роснефть» правленийĕн 11 членĕ 2014 çулта 3,7 миллиард тенкĕ «ĕçлесе» илнĕ, урăхла каласан, кунне кĕсьене кашни ĕç кунĕшĕн 1 миллион тенкĕ чикнĕ.**

Çав çул пирĕн çĕршыври вăтам ĕç укçи 25–30 пин тенкĕпе танлашнă, эппин, уйăхне 1 пин тенкĕ тивет: «Роснефть» правленийĕн членĕнчен пин хут сахалтарах. Ку монополин тĕп акционерĕ – «Роснефтегаз», вăл çĕр процентпе патшалăх аллинче. Апла, çавнашкал тӳлеме патшалăх хăй ирĕк панă. Çав вăхăтрах правительство пенсионерсем валли укçа çук тесе ларать. 3,7 миллиард тенкĕрен офшра мĕн чухлĕ куçнă-ши?

# Танлаштарса, шухăшласа пăхма

**Росстат евитленĕ тăрăх, ĕçсĕрлĕх Атăл тăрăхĕнче хăвăрт ӳссе пырать. Чăваш енре ĕçлеме пултараканссен 6 проценчĕ ĕçсĕр, регионта тăваттăмĕш вырăнта пыратпăр (кӳршĕлле Тутарстанра ку процент 0,8 танлашать).**

Çур çулта пирĕн республикăра хаксем пĕтĕмĕшпе 5,7 процент хăпарнă, тупăш курасси халăхра 14 процент чакнă.

Укçа йӳнелет, тарифсем – пысăкрах. Газшăн тӳлесси июльтен 2,6 процент чухлĕ ӳсет. Халăха хваттерпе тивĕçтересси пĕлтĕрхинчен икĕ хут чакнă.

Сывлăха сыхлас ĕçе Раççейре шалти пĕтĕмĕшле продуктăн (ВВП) 6,5 процентне тăкаклаççĕ. Пĕрлешӳллĕ Штатсенче – 17,1 процент, Голландире – 22 процент, кĕлмĕç Суданпа Нигерире – шăпах пирĕнни чухлĕ (6,5 процент).

Великобританире частниксен шкулĕсенче тӳре-шара единороссен ачисем 3511 таранах Раççейпе хуçаланма вĕренеççĕ. Кашни ачашăн кунта çулталăкра сахалтан 18 миллион тенкĕ тӳлеме тивет.

# Виç сăмах – çав элек пирки

Депутат пуканĕшĕн вăрçă вăйлă пырать. Тути-масине активнисем хăнăхнă-çке: влаç вăл – укçа, пурлăх, пуянлăх, пурлăхсăр халь вара влаçа кĕртмеççĕ. Депутатра ялпа район шайĕнче те рабочи çук.

Администраци суйлава каллех пĕр мандатлă округсем патне таварчĕ. Капла сулахай вăйсене ваклама ансатрах-мĕн. Капла Думăна партипе çыхăнманнисене тĕксе вĕсене тыткалама çăмăлтарах иккен. «ЕР соцтĕпчевĕсем» «Эпирех çĕнтеретпĕр!» кăшкăрупа ыттисене хупласа путарасшăн.

Коммунистсем влаçри ответлăхран хăраремĕç, çĕнтерсен те Ельцинах тыттарчĕç, вĕсене суйламалла мар тенĕ суя-элеке тепĕр хут ухалама тытăнчĕç. Анчах КПРФ «Майдан» партийĕ мар çав. Коммунистсем «майдана» тухнă пулсан, площадьре ырă кăмăллисем мар, либералсем, «бандеровецсем» çĕнтеретчĕç.

Халăх революцие хатĕр маррине Украинăри тĕслĕх аван кăтартрĕ. Г.Зюганов политамбиципе пăтранмасть, вăл – государственник. Мускавра та, Вашингтонри «обкомра» та лайăх пĕлнĕ: влаçа Ельцин тепле пулсан та урăх никама та памастчĕ, Конституцие пăрахăçласа, хăрушларах диктатура туса хуратчĕ, каллех юн юхатчĕ. Влаçра ун чухне Раççее курайман тăшмансем ытлашшипех пулнине шута илме тивнĕ. Мускаври «Майданра» либералсем çиеле тухасчĕк, чи малтанах, Ельцин тĕслĕхĕпе, компартие «тĕрмене хупатчĕç».

Г.Зюганов ответлăхран пăрăнман. Коммунистсем халăх влаçĕшĕн. Новосибирск хула пуçлăхĕ, Орел тата Иркутск облаçĕсен губернаторĕсем коммунистсем.

**Игорь ДАНИЛКИН.**

# Ырă мара сисетпĕр...

**Пулчĕ те**
**Тăват-пилĕк партире–**
**Пăнчă вырăнне**
**Каллех тире.**

◆

**Йăлт улăштарчĕ:**
**Уттине,**
**тирне,**
**ĕçне,**
**юлташсене.**
**Çапах та ан ĕненĕр пит,**
**Ĕлĕкхиллех вăл – икĕпит.**

◆

**Пурнăç – йӳнĕ.**
**Вилĕм – йӳнĕ.**
**Çăкăр, тупăк – хаклă-çке!**
**Виçĕ пуслăх – чухăн чунĕ,**
**Чухăн ĕмĕрĕ кĕске.**

◆

**Пуянсен çĕтмах пек кунĕ-каçĕ.**
**Кĕлмĕçсен ĕмри, тен, харама?**
**Пурпĕрех пĕр урама каяççĕ.**
**Пурпĕрех – пĕр ятлă урама.**

◆

**Пĕтĕм пулăм-тăрана, пăхсан,**
**Урмăшса, пуçхĕрлĕ çавăрчĕç.**
**Христоса паян çакас пулсан,**
**Кутăнла çакса пăталĕччĕç.**

◆

**Ĕмĕр-ĕмĕр тав Совет çĕрне:**
**Хĕрĕх пилĕк çул усрарĕ тăнăç.**
**Кам чарайĕ НАТО эшкерне?**
**Вăрçăсăр пĕр çул та, кун та тăмĕç.**

◆

**Хапхасене те питĕретпĕр.**
**Алăксене те тимĕрлетпĕр.**
**«Юлташ» темешкĕн иметпĕр.**
**Тăр-пĕччеçи пĕтĕрĕнетпĕр.**
**Пĕр-пĕринчен писетпĕр.**
**Ырă мара сисетпĕр.**
**Пĕтетпĕр...**

**М.ЯМАНДАЙ.**

**Вăрнар.**



# Ял уявĕ кĕрлерĕ

**Уяв сценарине вицĕ Явăш тăрăхĕн (Вăрнар районĕ) пултаруллă çыннисем Надежда Петровна Федоровăпа Нина Васильевна Андреева хатĕрленĕ. Ун йĕркине пысăк ăсталăхпа, хивре савăклăхпа юнашарăн тăрса тытса пычĕç.**

Çăкаллă Явăш вунтăххăрмĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче Мăн Явăшран уйрăлса тухнă. Çĕнĕ ял выранне тĕплĕн шухăшласа суйланă. Пурне те Мăн Çавала юхса кĕрекен юханшыв питĕ килĕшнĕ. Илемлĕ Çăка вăрманĕ юмансемпе, хурăнсемпе кашласа ларнă. Çурт-йĕр çавăрма йывăç çителĕклĕ. Çăкалăха хурт-хăмăр ăстисем килĕштернĕ. Вĕлле хурчĕсем йышлăн ĕçленĕ чух йывăç хăвăлĕсем сим пылпа тулнă. Çавал хĕррипе вылăх-чĕрлĕх ĕрчетме меллĕ пулнă. Çĕнĕ çĕрсем çинче тыр-пул ăнса çитĕннĕ.

Паян эпир çак ялта, çак Хăмла Сӳрет юханшывĕ хĕрринче Ял уявне паллă тума пуçтарăнтăмăр...

Мухтав юрри янăранăçемĕн Чăваш патшалăх ялавĕ çĕкленет. Ку чыслă церемонине пурнăçлама сатур йĕкĕте, çуллахи каникул вăхăтĕнче уй-хирте çуллен ырми-канми ĕçлекен çамрăка, Леонид Юрьевич Спиридонова, шаннă.

Ачасем сăвăласа та, каласа та ял историне паллаштараççĕ. Ял уявне «Мураты» хуçалăхра çурхи ĕçсене вĕçленĕ ятпа ирттерекен Акатуйпа çыхăнтарнă. «Мураты» хуçалăх ертӳçине, Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченне Геннадий Петрович Спиридонова, Мăн Явăш ял тăрăхĕн ертӳçине Андрей Анатольевич Васильева сăмах параççĕ.

Ялсен аслă пухăвĕ евĕр сумлă тĕпеленче – ĕç ветеранĕсем, хаклă хăнасем, çав шутра: Мускав хăни Эрик Васильевич Васильев полковник, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ, праçнике Шупашкартан эстрада ушкăнĕсемпе килсе çитнĕ Стас Владимиров...

Саламлă сăмахĕсене хăнасем асăмналăх парнесемпе палăртса хăварасшăн. Эрик Васильев явăшсен тăрăхне нихăçан та пушă алăпа çӳремен. Парнисене офицерсен Мускаври «Тăван çĕршыв ывăлĕсем» организацин пуçлăхĕ В.А.Ильин вице-адмирал алă пуснă Мухтав хучĕсемпе çирĕплетрĕ. Пысăк чыса тивĕçнисем хушшинче: Аслă Çĕнтерĕве ятран тӳпе хывнă тыл ĕçченĕ, Çăкаллă Явăшăн чи аслă хĕрарăмĕ Аксиния Петровна Тимофеева, Аслă вăрçă ветеранĕ, Çăкаллă Явăшăн чи аслă арçынĕ Алексей Терентьевич Терентьев, Çăкаллă Явăшăн вун улттăри, анчах вуннăранах тракторпа та, автомашинăпа та пултаруллă ĕçлекен чи çамрăк ĕçченĕ Юрий Спиридонов.

– Çапла пулса тухать, – терĕ хăйĕн асилĕвĕсене пĕтĕмлетнĕ майăн вăрçă ветеранĕ, тава тивĕçлĕ врач-хирург Николай Арсентьевич Аршуткин, – вицĕ Явăш тăрăхĕнче пĕтĕмпех ман тăвансем.

«Мураты» хуçалăх грамотисемпе наградăланисем вун çиччĕн пулчĕç.

Чăваш Республикинче Ĕç çыннин çулталăкĕ пырать. Уява «Синьял» колхоза нумай çул ертсе пынă Тимофей Федорович Федорова, унăн пиччĕшне Афанасий Федорович Федорова, 25 çул ытла пĕрремĕш бригада бригадирĕ пулнă Кузьма Федорович Федорова, вĕсен йышлă тăванĕсене, ачисемпе мăнукĕсене, кĕçĕн мăнукĕсене хăнана чĕннĕ.

1951 çулта «Синьял» Уйкас Явăшпа пĕрлешнĕ. «Восход» колхоза 1954 çулччене Тимофей Федорович ертсе пынă. Унăн хĕрĕ Агафия Тимофеевна Павлова вăрçă çулĕсенче бригада пуçĕнче тăнă.

Юрă-ташă нумая тăсăлчĕ. «Утă уйăхĕнче Мăн Явăш куне ирттермешкĕн кăмăл пур», – пĕлтерет ку ялти культура центрĕн ертӳçи Н.В.Андреева.

**М.МАЙСКАЯ.**

# «Едроссем» «Вăрçă ачисем» закона хирĕç

**Чăваш енре ку çула Ĕç çыннин çулталăкĕ тесе пĕлтерчĕç. Çур çул иртрĕ ĕнтĕ. Анчах Тăван çĕршывшăн чи йывăр çулсенче паттăрла ĕçленисен йăх-ăрăвне аса илни пулмарĕ-ха.**

Пирĕн ватлăх Совет Союзне, Раççее капитализма таврăнă вăхăтра килчĕ. Пурлăхшăн, долларшăн антăхнисем, мĕнпурне çĕмĕрсе-аркатса влаçа сирпĕнсе тухнисем, эпир тата пĕтĕм совет халăхĕ пухнă пуянлăха туххăм «прихватизацилесе» пире тăнчах чухăна хăварчĕç, 70 пин предприятие, çав шутра чи хăватлă заводсене йӳнĕпе туянса миллиардерсем, олигархсем пулса тăчĕç. «Коммунизма социализм тупăкне пăта çапакан чубайссем» рабочи класа салатрĕç. Ял аталанăвĕн шанчăклă, пархатарлă сийĕ – хресченсен класĕ колхозсемпе, совхозсемпе пĕрле путланчĕ. Буржуалла влаç вăрçă ачисене те йышăнмасть, шута хумасть, мĕншĕн тесен кусем «десоветизаци», «деиндустриализаци», «деколлективизаци» идеологине Ельцин арпашнă чухнех хытă сивлерĕç.

Эпир, ахăртнех, совет саманин вилсе пĕтмен юлашки ăрăвĕ. Эпир ачаран уй-хирте тарланă, станок умĕнче тăнă, партизансем хушшинче çитĕннĕ, чĕрлле çуннă, пинĕн-пинĕн тăшман тыткăнĕнче пĕтнĕ, сывăн юлма пӳрнисем вăрçă хыççăнхи пилĕкçуллăхсен ударникĕсем, çерем çĕрсен паттăрĕсем пулнă, пурте пекех правительствăн орденмедальне тивĕçнĕ. Тĕнче уçлăхне чи пирвай пирĕн ăру тухнă.

Тăван çĕршывшăн, пире чĕрĕ хăварасшăн çапăçса пуç хунă аттесем эпир телей курасса ĕмĕтленнĕ. Пире вăр-хурахла шулăксемпе мушенниксем çапла кĕлмĕçе хăварасси пирки вĕсем шутлама та пултарайман.

Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕ (ООН) кăтартнă тăрăх, Раççей халăхĕн 90 процентне чухăн пурăнать. Çак шутра 14 миллион çын – хальлĕхе шута илнĕ «вăрçă ачисем». Раççейри чи пĕчĕк пенси – вăрçă ачисен. Нумайăшĕн «смутăра» пенсие тухмалла пулчĕ, Ельцин çичĕ-сакăр уйăх таран ĕç укçи тӳлемерĕ. Вăрçă хыççăн Совет Союзĕнче 19 миллион тăлăх ачана шута илнĕ. Пĕрне те пăхмасăр хăварман, пособи тӳленĕ, тӳлевсĕр вĕрентнĕ, сипленĕ, аталанма, канма паха условисем туса панă. Халь пирĕн пенси аттесен вилтăпри çине ситсе курмалăх та çук. Ĕç тата социаллă хӳтлĕх министерствин кăтартăвĕсем тăрăх, «вăрçă ачисен» категорине кĕрекен 2,3 миллион çын социаллă хӳтлĕх тĕлĕшĕнчен нимĕнле çăмăллăхпа та усă курмасть. Вăрçă ачисен пĕрре-вицçĕмĕш пайĕ ялта пурăнать – кусем пушшех чухăнраххисем.

Пĕтĕм Раççейри «Вăрçă ачисем» юхăма КПРФ пуçарса çине тăнипе йĕркелерĕç. Унăн пирвайхи съезчĕ 2012 çулта пухăнчĕ. Кăçалхи апрелĕн 23-мĕшĕнче 2-мĕш съезчĕ пулса иртрĕ (съезд Чĕнсе калантипе парти хаçачĕсем тăрăх паллашма пултаратăр, калăпăр – «Чебоксарская правда», 18-мĕш №, июнĕн 8-мĕшĕ). Компартин (КПРФ) Госдумăри фракцийĕ «Вăрçă ачисем» законшăн ĕнтĕ пиллĕкмĕш çул çапăçать. 2013 çулхи кĕркунне Госдумăра проекта саккунлатма пурĕ Те 13 сасă çитмен. «Едроссем» ку закона пĕрмай хирĕç тăнине кура 2014 çулхи февральте Пĕтĕм Раççейри акцисем анлăн иртрĕç. Закона хатĕрлеме КПРФ чи вайлă специалистсене – паллă юристсене явăçтарнă. Кунсăр пуçне Госдумăна регионсенчен 11 проект тăратнă. «Вăрçă ачисен» статусне федераллă шайра палăртмалла, ку гражданcен категорине фронтовикветерансемпе танлаштармалла, тенĕ.

«Единая Россия» партин Госдумăри фракцийĕ кăçал вицçĕмĕш хут пирĕн закона хирĕç пулчĕ (е хирĕç сасăлаççĕ, е сасăлассинчен пăрăнаççĕ). «Едроссен» ялан пĕр юмах: «укça çук!». Пурĕ те 120 миллиард тенкĕ кирлĕ. Ку сумма Раççейрен катари офшорсене куçакан долларсен вицçинчен вицĕ хут пĕчĕкрех. 20 çулта 2 триллион доллар, пĕлтĕр кăна 84 миллиард доллар куçарнă. Пирĕн пĕри пĕр кунта миллионшар тенкĕ илекенсем те нумай(Газпром, Роснефть, Роснано, ыттисем...). ВТОна кĕнипе вицĕ çулта Раççей бюджетĕнчен 800 миллиард тенкĕ катăлнă. КПРФ ĕнтĕ 20 çул асăрхаттарать: чĕртавар базине национализацилени Раççей бюджечĕн тупăшне хальхи 13рен 20 триллион тенкĕ таран ӳстерĕччĕ. Спирт продукцине патшалăх монополийĕ туса хуни бюджета тепĕр 3,3 триллион тенкĕ хушĕччĕ. Пĕр-икĕ çулта банкирсемпе биржа спекулянчĕсене 5 триллион тенкĕ парса «пулăшнă», терĕç. Кăштах мĕншĕн хамăрăннисене пулăшас мар?

«Вăрçă ачисем» закон хăшпĕр регионсенче пур. Чăвашсен çук-ха. Тĕлĕнмелле тĕслĕх: «Вăрçă ачисем» закона 2006 çулта Украинăра вăя кĕртнĕ чухне çакна хирĕç тăма бандеровецсем те хăяйман!

«Вăрçă ачисен» пĕрлешĕвне хăйсен ирĕкĕпе кĕнисем Вăрнар районĕнче 2200ĕн (заявленийĕсене Госдумăна тăратнă). Законшăн эпир те Пĕтĕм Раççейри акцие хутшăннă. 150 ытла çынна «Вăрçă ачисем» медалĕпе, Аслă Çĕнтерĕвĕн 70 çулхи юбилейĕ ячĕпе кăларнă медалĕпе наградăларăмăр.

Госдумăна хамăртан 226 депутат суйласан, «Вăрçă ачисем» закон вăя кĕретех!

**В.СКВОРЦОВ,**
**«Вăрçă ачисем» юхăмăн Вăрнар районĕнчи уйрăмĕн ертӳçи,**
**А.Емельянов ячĕпе хисепленекен премии лауреачĕ.**

# Йытă пурнăçĕ

Каçатăп йыт пулккиллĕ урама.
Паллаççĕ те – кашни манпа йăпанчăк.
Сĕртĕнкелерĕ икĕ урана
Кив çĕлĕк евĕрлĕ пĕр выçă анчăк.

Пăхать ачаш ача пек тилмĕрсе.
Ăнлантăм: эс – çĕнни те кĕçĕнни.
Ан сехĕрлен – хӳтермĕп тилĕрсе.
Эп хам та санашкал... Урам çынни...

Вĕткеленетĕр килсĕр, пилсĕр, выçă,
Чĕлхесĕрсем, чухлатăр тивĕçе:
Тĕпренчĕксем сапатăп та пĕр ывçă,
Тав тунăн тинкеретĕр кĕлмĕçе.

Çавăртнисем хăраççĕ сирĕнтен.
Йĕрĕнерехчĕн, мăннăн пăрăнаççĕ.
Пыршисене тултарнă та иртен –
Тӳшек çинче вĕсен ыр кунĕ, каçĕ.

Сире кĕçех пере-пере пăрахĕç.
Çак «çĕтĕк çĕлĕкĕн» ĕмри кĕске.
Раççейĕпех хуçаланать хурах ĕç –
Пĕрне-пĕри кăнтса хурас йĕрке.

Сана, йытта, йыт вилĕмĕ, тесе,
Пиçнĕсмена çапса пăрахнă киллер.
Тискер укça – тăмасть вăл тиркесе:
Предприниматель те, банкир те – вилĕр!

«Мерседесра» ларать чиновник-хам,
Хăйне те, çĕршывне те сутнăскер.
Руль умĕн урнă кашкăр пек хам-хам,
Пурне те хатĕр туллама – тискер...

Шутлатăр пуль: «Эпир – тĕнче хуçи».
Анчах пуçа ан каçăртăр сĕре!
Сире те йытă пурнăçĕн вицçи
Танлаштарма пултарĕ иксĕре.

...Пуриншĕн те кун иртрĕ – хĕвел анчĕ.
Пĕр çăкăрлăх ĕçлерĕм аранах.
Йыт пулккинчен кăшт уйрăлчĕ те анчăк,
Сĕртĕнкелет ачашшăн урана...

**М.ВАСИЛЬЕВ.**

КПРФ
Чăнлăх
УЧРЕДИТЕЛЬ КПРФ Чăваш рескомĕ
Редакторшăн М.Васильев.

Хаçата Раççей Федерацийĕн пичет министерствин Атăлçи территори управленийĕнче регистрациленĕ.
Регистраци свидетельстви № ПИ18-1297

Хаçатра илсе кăтартнă фактсемпе пĕлтерӳсемшĕн авторсем яваплă.
■ Ал çырăвĕсемпе ытти материалсене регистрацилемеççĕ, авторсене таврăса памаççĕ.
■ Материалсене илсе пичетленĕ чух пирĕн хаçат ятне асăнмалла.

**Редакци адресĕ:** 428013, Шупашкар хули, Мир пр., 82-мĕш А çурт.
**Телефон:** 8 (8352) 28 99 91
Хатĕр пленкăсенчен ПУП «Чувашия» ИПКра пичетленĕ.
**Адресĕ:** Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт.
**Тираж** 30000 экз.
Заказ